Симĕс ĕç çи маршручĕсемпе

# Çу кунĕпе туллин усă куратпăр

Çу кунĕсем талăкпа мар, сехетпе хыçа юлса пыраççĕ. «Хĕвел çӳлте – Пукрав инçе» тесе лăпалса ларакансем çитес хĕл кунĕсенче мĕн курĕç – ăна хĕл кунĕсем кăтартса парĕç. Иртнĕ кунсенче пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем уяр кунсен кашни сехечĕпе тулăх усă курас тĕллевпе вырма алăкран шакканине илтсе çĕнĕ вăй-хăватпа выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе кӳлĕнчĕç. Çак ĕçсене хире «хир карапĕсем» тухиччен ытларах та ытларах лаптăк çинче пурнăçласа май килнĕ чухлĕ нумайрах тонна утă, сенаж-силос янтăлама пикенчĕç. Кашниншĕнех паллă, кая юлсан – каю шăтать.



Симĕс масса траншейăна пĕр чарăнмасăрах килсе тăрать.

Çак тĕрĕслĕхе Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче кулленех малти вырăнта тытаççĕ. Умри ĕçсене хăйсем пурнăçламасан, никам та туса парас çуккине Исетерккĕсем аван ăнланаççĕ.

–Шурă юр çиййĕн утă янтăлаймăн. Выльăх умне те çуллахи илемлĕ кунсенче технологие пăхăнса хатĕрленĕ сенаж-силоса çеç хурайăн. Çакă вăл хĕл кунĕсенчи тухăçăн тата экономика тĕрекĕн никĕсĕ. Юптаруri пек çулла çу кунĕсене юрласа та выляса ирттерсен хĕл кунĕсенче савăнăç валли вырăн юлмасть. Çакна ăнланатпăр тата уй-хир ĕçĕсен планĕпе килĕшӳллĕ ĕçлетпĕр, – терĕ хиртен ĕçлекен Андрей Илларионов çине ĕçе чĕнсе пăхса илнĕ май. Андрей кăçал Чуманкассинчи вăтам шкула вуннăмĕш класа вĕренме каять. Çу кунĕсенчи çĕршер шкул ачи пекех каникул вăхăтне çамрăк тăван хуçалăхри уй-хир ĕçĕсенче ирттерет.

Эпĕ симĕс массăна валеçекенсемпе калаçнă хушăра çывăхри ДТ-75 бульдозер хăватлă сасă кăларса ĕçлеме пуçларĕ. Механизатор опытне самай пухнă,



Александр Степановпа Андрей Илларионов шаннă ĕçе тивĕçлипе пурнăçлассишĕн тăрăшаççĕ.

килнĕ МТЗ-80 трактор çинчен симĕс массăна пушатса юлнă тата ăна пусăрăнтаракан трактор валли траншейăра валеçме пуçланă май çулсенчи хресчен Александр Петрович Степанов пĕрле юлашки тăватă çулта Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче вăй хуракан вăй питти Владимир Игнатьевич Никифоров «хурçă утне» сенаж масси еннелле уттарчĕ. Пĕр метр, иккĕ... сенаж масси траншейăна сарăлса та выртрĕ.

– Сенаж хатĕрлес технологие пĕрремĕш вырăнта тытатпăр. Çĕнĕ е кивĕ технологипе, анчах траншейăра ĕçлекен Санькăпа Андрей траншейăри массăна тикĕслесех тăраççĕ, хушнă вăхăтра кирлĕ чухлĕ тăварне те сапаççĕ. Манăн тĕллев вара хиртен килнĕ массăна вăхăтра пусăрăнтарса тăрасси, –терĕ вырăсла калаçакан В.



Владимир Никифоров механизатор хăйĕн «хурçă утне» самантлăха та ĕçсĕр лартмасть.

Никифоров бульдозерист.

Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăх иртнĕ эрнерех нумай çул ӳсекен курăксене çулса пĕтернĕ (203 гектар). Çулас ĕçре 17 çул механизаторта вăй хуракан Гена Илларионов маттур пулнă. Массăна турттаракан Владимир Трофимов водитель, Эдуард Алексеевпа Игорь Соколов механизаторсем паян лăш канмасăр вырмана тухиччен хăйсен ĕçне вĕçлессипе тимлеççĕ.

Утă хатĕрлессипе те ял хуçалăх производство кооперативĕ районта начар ятлисен йышĕнче мар. Иртнĕ кунсенче хуçалăх ĕçченĕсем утă янтăламалли плана 92 процент (280 тонна) тултарнă.

Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхпа пĕрлех выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсем районта «Восток», «Герой», «Оринино», «Свобода», Суворов яч. хис., «Ударник» хуçалăхсенче аван пыраççĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Ĕмĕр сакки сарлака

# Кинемей 90 çул тултарчĕ

Пурнăç. Калама кăна çăмăл. Мĕн чуль унта пăрăнăç, йывăрлăх та хуйхă-суйхă. Çакна йăлтах хăвăн ĕнсӳ çинче чăтса ирттерсе, чĕрере ыррине хăварса татах малашлăха шанса 90 çул пурăн-ха...



Ситуккассинче пурăнакан Июлита Алексеевна Петрован хыçа юлнă тăхăр теçетка çулпа туллин савăнма, хăй хыççăн хăварнă ырă ĕçсемпе мăнаçланма паян тулли право пур. Паян вăл икĕ туяпа шакăртаттарса çӳрет пулсан та ĕçсĕр лараймасть. Кĕçĕн ывăлĕпе, кинĕпе, çамрăк мăнукĕсемпе пурăнаканскер, вăл паян вĕсенчен кашнинех усăллă канаш пама тăрăшать. Алла 60-70 çул каяллахи пек сенĕккĕреçе тытса ĕçлеймесен те, çурла илсе тырă вырма тухнисем манăçа юлнă пулин те, хăйĕн пурнăç опычĕ ачисемпе мăнукĕсене усăллă пуласса шанать вăл...

– Çĕршыв ертӳçисем çемьесенче нумайрах ачасем çуратма хавхалантарнине ырлатăп. Ахальлĕн эпир тунă ĕçсем кам аллине юлĕç? – терĕ хăй мĕнле çемьере çуралса ӳснипе интересленсен тарăн шухăшлă калаçакан Июлита кинемей. – Нумай ачаллă пулнă эпир. Пирĕн вăхăтра сахал ачаллă çемье пулман та. Вăхăчĕ çаплă пулнă пуль.

1918 çулхи июлĕн 25-мĕшĕ. Раççейре революци вăй илнĕ, граждан вăрçи пынă вăхăт. Мăн Сĕнтĕр патĕнчи Кармăш ятлă ялта нумай ачаллă хресчен çемйинче хĕр ача кун çути курать. Ят хума тăрсан тăвансем пĕрле пулса ăна ИЮЛИТА ят хураççĕ. Мĕн кăна тӳсмен-курман пулĕ хăй пурнăçĕнче çак хĕр ача. Граждан вăрçи, колхозсем туни, выçлăх çулсем, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçипе ун хыççăнхи йывăр тапхăр, яла пĕрремĕш трактор килни, совет çынни космоса çĕкленни...

23 çулхи хĕр 1941 çулхи январь уйăхĕнче Ситуккассине Федор Петрович Петрова качча тухать. Çĕршывра вара хаяр вăрçă пырать. Пĕрлешсе çур çул пурăнсанах мăшăрне мобилизаци йĕркипе фронта илсе каяççĕ. Хĕр те çĕршыв тĕреклĕхĕшĕн сахал мар вăй хунă: Июлита халăхпа пĕрле колхозра тăрăшнă, Çĕмĕрле таврашне окопсем чавма çӳренĕ, колхоз ферминче вăй хунă. Фронтри мăшăрĕ 1942 çулта йывăр аманать, санитарсем асăрханипе çеç, вилнисемпе пĕрле хурнăскер, пурнăçра юлать. Вилнĕ хучĕ яла килнĕ хыççăн вăл вăрçă чарăнсан кăна яла таврăнать. Пурнăç йĕркеленсе кайрĕ темелле. 1946 çулхи сентябрьте мăшăрсен пĕрремĕш ача çуралать. «Ун чух ачасемпе çулталăк çурă ларайман çав. 3 кунтанах бригадир ĕçе хăваларĕ», – аса илет кинемей куççульне шăлса илнĕ май. Çак хĕр ача хыççăн Июлита Алексеевна 5 ывăл парнелет мăшăрне. Анчах пĕринпе те ĕç пăрахса ларман.

– Уйра çынсем канма ларсан ачасене кăкăр сĕтне çитерме киле чупаттăм. Каялла таврăнсан ĕçе тăнă хĕрарăмсем малалла кайнине хăваласа çитессипе тимленĕ. Йывăр пулнă, анчах чăтнă, пуç усман, – тет паян та пурнăç çине кăмăллă пăхса Июлита Алексеевна.

Ĕçре пиçсех мăшăрсем ачисене тивĕçлĕ пĕлӳ панă. Халĕ вĕсем пурте çемьеллĕ. Мăшăрĕ 1989 çултах çĕре кĕнĕ пулсан та, Июлита кинемей ачисен ăнăçлăхĕпе, 9 мăнукпа 7 прамăнукĕн утăмĕсемпе савăнса пурăнать.

– Çĕршыв ертӳçисем ял çыннисем çине тимлĕх уйăраççĕ теççĕ те, савăнтарать пире вăл. Çамрăксене ачасем çуратма хавхалантарни те – çĕршыв пуласлăхĕ. Вĕсене пӳрт-çурт çавăрма пулăшни вара – ял малашлăхĕ. Яла пĕтме парас марччĕ, – терĕ Июлита Алексеевна Петрова çумри туйисене черетлĕ çул çӳреве хатĕрленĕ май.

90 çул тултарнă ятпа ачисем, вĕсен çемйисем, мăнукĕсем, прамăнукĕсем, çывăх тăванĕсем саламлаççĕ ăна, 100 çулччен пурăнма ырлăхсывлăх сунаççĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

Суд залĕнчен

# «Хлебороб» пурлăхне хапсăннăшăн

... 2008 çулхи нарăс уйăхĕн 3-мĕшĕ. Иртнĕ çулхи авăн уйăхĕн 4-мĕшĕнче 6 уйăхлăх айăплавран ирĕке тухнă 32 çулхи Саша хăйĕнпе пĕрле пурăнакан А. Семеновапа хăйĕн харпăрлăхĕнчи ВАЗ-2106 çăмăл автомашинипе Ильинка ял тăрăхĕнчи Макаçи ялне асламăшĕ патне курма килме тухать. Тренккă патне çитеспе машина çĕмĕрĕлнĕ. Автомашина «Хлебороб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн трактор паркĕ çывăхĕнче çул хĕрринче чарăнса ларать. Иртнĕ вăхăтсенче «Хлебороб» хуçалăхра механизатор пулса ĕçленĕ Саша паркра «пулăшу» тупма пулать пулĕ тесе унта утать. Хăй вăхăтĕнче кунта ĕçленĕскерĕн, хурал пӳрчĕн алăкĕ çинче пысăк çăра çакăнса тăнине курсан, трактор паркĕнче ăçта мĕн выртнине пĕлнĕрен, никам çуккипе усă курса, «пуяс» шухăш çуралать. Çак тĕллевпе каччă склад еннелле утать. Хăйĕн машининчен тимĕр касмалли пăчкăпа фонарик илсе «каçхи сунарçă» склад еннелле каять.

Акă склад алăкĕ уçăлса кайрĕ. Хуçалăхра механизаторта ĕçленĕ чух кунта пĕрре мар запас пайсем илме кĕнĕччĕ-ха, анчах ун чух склад хуçи пулнă, кирлĕ запас пайне вăл илсе панă. Паян вара Саша кунта хăй «хуçа». Электропăчкă та арçынна кирлĕ, 40 килограмм полиэтилен пленки те ял çыннине чăрмантармасть (хăв усă курмасан, çынсене сутма пулать), автомашинăпа çӳрекене генератор та ытлашши мар, тĕрлĕ тĕслĕ подшипниксемпе электроудлинитель те автомашинăпа ĕçлекене час-часах кирлĕ пулаççĕ, вĕсене йăтса тухма витрепе полиэтилен михĕ те ытлашши мар... Çапла вара колхоз пурлăхĕ тепĕр самантранах «Жигули» салонне куçать.

Пĕлнĕ-и-ха çав самантра Саша районти шалти ĕçсен пайĕ тăтăшах «Шырав» ушкăна ĕçе кăларнине? Пĕлнĕ пулсан тĕрме тути тутаннă арçыннăн йĕркене пăсас çула тепре суйламалла марччĕ, анчах...

Нумаях пулмасть ку ĕç пирки суд пулчĕ. Колхоз пурлăхĕпе тата хуралсем вырăнта пулманнипе пуйма шутланă Сашăн халĕ тепĕр тăхăр уйăх йĕплĕ карта хыçĕнче ирттерме тивет. Мĕн тăвас, хамăр çула эпир хамăр суйлатпăр.

**Л. РУЗМИКИНА, шалти ĕçсен пайĕн следстви уйрăмĕн аслă следователĕ.**

ФИЛИАЛ ФГУП “РОССПИРТПРОМ” “ЛВЗ “ЧЕБОКСАРСКИЙ”

«Чебоксарский» эрех завочĕ ВЫЛЯВ ирттерет

Акатуй. Çитрĕ реххетлĕ çулла!




«Акатуй» ретĕнчи ĕçмеллисен (шурă эрех, аперитив, пылпа пăрăç эрехĕ) çур литрлă кĕленче çинчи штрихлă 10 этикеткине пуçтар.

Вĕсене çак адреспа ярса пар, Шупашкар хули, К. Иванов урамĕ, 63 («Выляв» тесе паллă ту)

Тĕп парнене - «Турист пуххине» тата 5 чаплă парнене - «Пикник - пуххине» выляса илме хутшăн»

Шантарнă парнене ил (этикетка янă малтанхи 100 çын)!



Акци 2008 çулхи июнĕн 16-мĕшĕнчен пуçланнă, августăн 13-мĕшĕнче вĕçленет. Выляв «Акатуй» суту-илӳ çуртĕнче «Шупашкар хули, Университетская урамĕ, 22» августăн 15-мĕшĕнче иртет. Тĕплĕнрех пĕлмелли адрес: www.vodkavolga.com, телефон (8352)42-66-34

эрехе виçесĕр ĕçни сывлăхшăн хăрушă